Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

79 (7933) № * Юн кун, 2011 ҫулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Мĕн пуррине пуҫтарса илмеллех

Ҫĕр улми пуссисенче



...Юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче «Ударник» хуҫалăхĕн Матьăк уйĕнчи ҫĕр улми пуссине кăнтăрчченех ҫитрĕмĕр. Тулăх кĕркуннен илемĕнче ачасен савăк сасси инҫетренех хăлхана кĕчĕ. Ачасемпе тулнă хире кăткă тĕммипе танлаштартăм та сывăха ҫитсен йăнăшмарăм. Йышлă вĕсем унта, анчах ĕҫе йĕркелекенсем вырăнта пулнăран никам та йытă хăваламасть: кашнин хăйĕн вырăнĕ, шаннă ĕҫĕ. Акă Чуманкассинчи вăтам шкултан Матьăксене «иккĕмĕш ҫăкăр» кăларма-пуҫтарма пулăшма килнĕ аслă класс ачисем копалка иртсе кайсан шап-шурă выртса юлнă ҫĕр улмине карҫинккасене пухса автомашинăна тиеҫҫĕ. Пуҫланă анан тепĕр вĕҫĕнче аслисен ушкăнĕ ĕҫлет.

Сăмах май, ҫĕр улми кăларас ĕҫре «Ударник» хуҫалăх ĕҫченĕсене паян район администрацийĕнчен килнĕ ушкăн, Йӳҫкассинчи тата Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕсем, Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан ял ҫыннисем пулăшаҫҫĕ. Ватти-вĕтти – пурте ҫĕр улми пуссинче пĕр тĕллевпе вăй хурать.



– Аслисене пулăшни нихăҫан та ытлашши пулмасть, – тесе карҫынккасене ҫĕр улми пуҫтарма пуҫларĕҫ Чуманкассинчи вăтам шкултан пулăшма килнĕ хĕр ачасем. Ҫакна та каласа хăвармалла. Чуманкассинчи вăтам шкулти аслă класс ачисем паян «Ударник» хуҫалăхĕсĕр пуҫне Ильич яч. хис. тата Чапаев яч. хис. ял хуҫалăх производство кооперативĕсенче те ҫĕр улми пуҫтарма пулăшаҫҫĕ. Кам ытларах ĕҫ тунă – ҫакнашкал хăйне евĕр ăмăрту пырать кунта ку тĕлĕшпе.

Хуҫалăхра ҫĕр улми кăларассипе ятарлă механизациленĕ звено ĕҫлет. 5 комбайнпа 5 копалка кулленех ĕҫре. Ҫĕр улми кăларакан комбайнсемпе ĕҫлекенсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраҫҫĕ. Вĕсем: Михаил Павлов, Виталий Федоров, Олег Иванов, Иван Иванов, Иван Владимиров экипажĕсем. Копалкăсемпе ĕҫлекен механизаторсем те – Алексей Иванов, Иван Иванов, Вениамин Федотов, Николай Семенов, Сергей Шумилов – уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курассине хăйсен тĕллевĕ тесе шутлаҫҫĕ.

– Хирти вăл пӳлмери мар. Ҫавăнпа та кăларнă ҫĕр улмине ҫийĕнчех хранилищĕне турттарассипе тимлекен водительсен отрядне те ырăпа палăртмалла. Кунта И. Львов, И. Степанов, Ю. Иванов, В. Алексеев, А. Филиппов, П. Грачев, В. Семенов, Ю. Семенов, А. Семенов, В. Петров, Г. Андреев, Г. Сергеев хастар. Ĕҫлекенсене хире кăларассипе тата киле леҫессипе И. Григорьевпа В. Аркадьев ответлăха туйса ĕҫлеҫҫĕ. Ĕҫлекенсене апат ҫитерессине Г. Малинин водитель вăхăтра пурнăҫласа пырать, – ăнлантарчĕ пĕтĕмĕшле лару-тăрăва Йӳҫкасси уйрăмĕн ертӳҫи А. Кузьмин.

Копалкăсемпе комбайнсем пĕр тикĕссĕн каяҫҫĕ. Ҫĕр улмипе тулнă автомашинăсем те пĕрин хыҫҫăн теприн хиртен тухаҫҫĕ. Эпир вырăнтан тапрантăмăр. Ылтăн кĕркунне хупăрласа илнĕ вăрман ҫумĕнчи ҫавăрмакра вара ĕҫченсен хаваслă сасси, кăмăллă кулли инҫете илтĕнсе юлчĕ. Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне «Ударник» хуҫалăх ĕҫченĕсем 90 гектар ҫинчен (50 процент) ҫĕр улми кăларса пухса кĕртнĕччĕ. **Районĕпе вара «иккĕмĕш ҫăкăр» пуссинчи ĕҫсем ҫапларах. Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуҫалăхсем пĕтĕмпе 791 гектар ҫĕр улми кăларнă. Ку вăл пĕтĕмĕшле лаптăкăн 61,6 проценчĕ.**

Кĕрхи йĕпе-сапана пăхмасăрах ҫĕр улми кăларас ĕҫ малалла пырать. «Иккĕмĕш ҫăкăр», кишĕр кăларас ĕҫе шкулсенчи аслă классемпе пĕрле район администрацийĕн тата районти тĕп больницăн ĕҫченĕсем те активлă хутшăнаҫҫĕ. Иртнĕ шăмат кун, юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче, вĕсем (62 ҫын) «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна кишĕр кăларса пулăшнă. Ĕнер те ҫумăрлă ҫанталăка пăхмасăрах вĕсем ĕҫе тухрĕҫ.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: копалкăпа ĕҫлекен И. Иванов механизаторпа ҫĕр улми турттаракан А. Филиппов водитель; ҫĕр улми пуссинче ĕҫ вĕрет кăна.**

Республикăра

## Сывлăха сыхлассипе – патшалăх программи

Ĕнер республикăри Министрсен Кабинечĕ «Сывлăха сыхлас ĕҫе аталантарасси» патшалăх программине 2012 – 2020 ҫулсем валли йышăннă.

Ăна пурнăҫлама 2012 ҫулта 9 млрд. та 241 млн. тенкĕ уйăрма палăртаҫҫĕ. 2020 ҫул тĕлне укҫа-тенкĕ тăкакласси 11 млрд. та 456 млн. тенкĕне ҫитмелле.

Укҫа-тенкĕ сиплев учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине ҫирĕплетме те каять. Патшалăх программипе килĕшӳллĕн больницăсене юсама, медицина центрĕсене хушма оборудованипе тивĕҫтерме пăхнă.

Кадрсен ыйтăвне те татса пама палăртнă. Паян пысăк квалификациллĕ пин ытла врач ҫитмест.

Тухтăрсен ĕҫ укҫине палăрмаллах ӳстерме палăртаҫҫĕ. 2020 ҫул тĕлне вăтам ĕҫ укçи 30 пин тенкĕпе танлашмалла.

Программа ҫынсене пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илме майсем туса памалла.

## Наци телевиденийĕ эфира тухрĕ

Тунти кун пулса иртрĕ ҫак пĕлтерĕшлĕ пулăм. Ҫĕнĕ компани йышĕнче радио тата телевидени. Наци радио передачисене итлекенсем пĕлесҫĕ ĕнтĕ.

Ҫĕнĕ телевиденин передачисене халĕ Шупашкарта пурăнакансем пăхма пултараҫҫĕ. Пурăна киле наци телевиденийĕ кашни киле ҫитĕ.

Передачăсем эфира чăваш тата вырăс чĕлхисемпе тухаҫҫĕ.

Районта

## 300-мĕш ачана регистрациленĕ

Ача ҫурални – ҫемьере яланах савăнăҫлă пулăм. Шăпах ҫак куна – ача ҫуралнин кунне – ашшĕ-амăшĕ ҫуллен паллă тăвать. Кунпа пĕрлех ача ҫуралнине регистрацилени те палăрмăллă самант пулса тăрать: пепкене ят параҫҫĕ, ашшĕ-амăшĕ тĕп документ – Раҫҫей Федерацийĕн ҫĕнĕ гражданинĕ ҫуралнине ҫирĕплетекен свидетельство илет.

Район администрацийĕн ЗАГС пайĕнче ҫак кунсенче Харьковсен ҫемйинче ҫуралнă Владимир ячĕпе ăшă сăмахсем янăрарĕҫ. Алексей Владимировичпа Надежда Александровна Хорнуй ялĕнчен. Вĕсен Владимир ывăлĕ – районта кăҫал ҫуралнă 300-мĕш ача.

Телейлĕ амăшĕшĕн ҫакă питех те савăнăҫлă кун пулчĕ. Хăйĕн иккĕмĕш ывăл ҫуралнине ҫирĕплетекен документсăр пуҫне вăл салам адресĕпе асăнмалăх парнене тивĕҫрĕ.

**Хамăр инф.**

Вакцинаци

## Грипп чирне хирĕҫ

Республикăна грипп чирне хирĕҫ кĕрешме 140 пин доза «Гриппол» вакцина килнĕ.

Инфекци чирне асăрхаттарас тĕллевпе ҫак вакцинăпа аслисене ҫеҫ мар, 6 уйăхран аслăрах ачасене те прививка тума юрать. Прививка тунă хыҫҫăн тĕрĕ 8–10 кунран организмра грипп чирĕнчен хӳтĕлекен вăй аталанса ҫитет, вăл 12 уйăха яхăн пырать.

Муркаш районне 4686 доза вакцина илсе килнĕ. Вакцинаци пуҫланчĕ. Апла прививка тума васкăр. Вăл – чире хирĕҫ кĕрешмелли чи хăватлă мел.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Савнă мăшăра, хаклăран та хаклă, юратнă аннене, кукамая, асаннене, сывăх тăвана – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Генриета Георгиевна ПЕТРОВĂНА** 55 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ĕмĕрӳ шур пир пек вăрăм, пурнăҫу хушпу кĕмĕлĕ пек ҫутă, сывлăху юман пек ҫирĕп пултăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, сапла мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ, мĕн пур тăванĕ.**



Юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче пирĕн юратнăран та юратнă, ҫепĕҫ кăмăллă аннен, кукамайăн, асаннен, хуняман, тăхлачăн, инкен – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Мария Степановна ВАСИЛЬЕВĂН** ҫуралнă кунĕ. Эпир ăна 85 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă, ҫепĕҫ сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Сывлăху сан ҫирĕп пултăр, кунҫулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Турри сана пулăшса пытăр.

**Салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсемпе кĕҫĕн мăнукĕсем, тăванĕсем, пускилсем.**

## Ҫынсен хăйсене хӳтлĕхре туймалла

Указ

2011 ҫулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ М. Игнатьев «Чăваш Республикинчи халăха ҫурт-йĕрпе коммуналлă ҫăмăллăхсем панă чухне унăн прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлемелли хушма мерăсем ҫинчен» Указа алă пуснă.

Документра коммуналлă пулăшу панă чухне Чăваш Республикинче пурăнакансен прависене саккунлă интересĕсене тивĕҫтермелли хушма мерăсем пăхнă. Коммуналлă хуҫалăхпа ҫыхăннă ҫивĕч ыйтусенчен нумайăшне вырăнти хăй тытăмлăх шайĕнче татса памалла.

Чăваш Енре ертсе пыракан 114 организаци. Пĕри – муниципалитетăн, ытти уйрăм ҫынсен харпăрлăхĕ шутланать. Хăш-пĕр муниципалитет пĕрлешĕвĕнче пĕр компани ҫеҫ. Пĕр-пĕрин хушшинче тупăшса ĕҫлесси ҫук. Ҫакă лайăххах ĕҫлекеннине суйласа илме май памасть. Ҫак ҫитменлĕхе пĕтерес пулать.

Коммуналлă комплекс организацийĕсен ĕҫне, вĕсене ертсе пырассине уҫăмлатас тĕллевпе Раҫҫей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ҫынсене мĕнле пулăшусем парасси, тарифсемпе тӳлевсем ҫинчен пĕлтересси тата вĕсемпе паллашма май туса парасси ертсе пыракан компанисен тивĕҫĕ пулса тăрать. Мĕншĕн тата мĕнле тарифсемпе тӳлемеллине ҫынсен пĕлмелли.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ пĕрлехи сайт – www.jkx.cap.ru – уҫма йышăннă. Пĕрлехи сайт ҫынсене ертсе пыракан компанисен ĕҫĕпе, мĕн пур шайри влаҫ органĕсен вĕсен ĕҫ-хĕлне тĕрĕслесе тăма тата граждансен ирĕкĕсемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлеме май парĕ.

Нумай хваттерлĕ ҫуртсене 2008 ҫултан Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх тытăмне реформăлама пулăшакан фондран уйăракан укҫа-тенкĕпе ҫĕнетнĕ. Фонд хăйĕн ĕҫне 2013 ҫулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вĕҫленине шута илсе Указра нумай хваттерлĕ ҫуртсене тĕпрен юсама пулăшакан республика фончĕ тума пăхнă. Пурăнмалли вырăншăн тата коммуналлă пулăшушăн хывакан тӳлевпе тарифсем пирки сиксе тухакан тавлашуллă ыйтусене пăхса тухмашкăн Правительство комиссийĕ йĕркелемелле. Ҫавăн пекех вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене ертсе пыракан компанисен ĕҫне-хĕлне тĕрĕслекен комиссисене ҫирĕплетме сĕннĕ.

# Гагарин урамĕнче çĕнĕ çурт çĕкленĕ

Строительство



Хаçат вулакансем, районта пурăнакансем Муркашри Гагарин урамĕнчи икĕ хутлă 18-мĕш номерлĕ йывăç çурта астăваççĕ ĕнтĕ. Ишĕлчĕк çуртсен шутне кĕртнĕскере пăснăччĕ, унта пурăннă 12 çемьене çĕнĕ çуртсенчи хăтлă хваттерсене вырнаçтарнă.

Халĕ вара çывăх вăхăтрах ку çурт пулнă вырăнта строительство ĕçĕсем çĕнĕрен пуçланмалла. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ Владимир Германович Никитин каласа панă тăрăх кунта висĕ хутлă, 24 хваттерлĕ, икĕ подъездлă хăтлă çурт ÿссе ларĕ. Строительство ĕçĕсене хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ пурнăçлать.

– Строительство ĕçĕсем валли площадкăна хатĕрлеме пуçăнтăмăр ĕнтĕ. Çывăхри хăш-пĕр тимĕр гаражсене урăх вырăна куçаратпăр. Тимĕр-бетон изделийĕсем кÿрсе килетпĕр,– каласа парать строительство организацийĕн тĕп инженерĕ Александр Олегович Федоров.– Строительсем Парковая урамра 48 хваттерлĕ çурта туса пĕтерчĕç ĕнтĕ. Çывăх вăхăтрах кунта строительство ĕçĕсем анлăн пуçăнмалла.

Çĕнĕ çурта çитес çул вĕçленнĕ тĕле хута яма пăхнă. Ăна хваттер илес текенсен пай укçипе усă курса тăваççĕ. Асăннă хăтлă объект район центрне татах та илемлĕрех те хăтлăрах тăвĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: çакăн пек хăтлă çурт ÿссе ларĕ район центрĕнче.**

# «Юрать хыçа юлчĕ вăл вăхăт»

Астăвăм



– Паянхи тулăх пурнăç, канлĕ ватлăх пирки ун чухне тĕлĕкре те тĕлленме пултарайман эпир, – тесе пуçларĕ каласăвне Якаткасси ялĕнчи Егор Григорьевич Васильев.

Вăл Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă çулхи ноябрь уйăхĕнче çут тĕнчене килнĕ. Унччен маларах ашшĕ вăрçа тухса кайнăран Егор ăна пачах та курайман. Çапла вара арçын аллисĕр тăрса юлнă кил-йыш йывăрлăх серепине лекет. Хуçалăхри мĕн пур тиев амăшĕн хул пуççийĕ çине тиенет. Ачи-пăчи вак, ĕçлемелли вара туллиех. Çавăнпа та пулĕ самай нушаланнă хĕрарăм каярах йывăр чирлесе вырăнпах выртма пуçлать. Çапла вара чылай çул хушши унăн хăй ачи-пăчин тата ытти çывăх çынсен куçĕнчен пăхса пурăнма тивет.

– Пирĕн, пĕчĕкскерсен, тăтăшах çиес килетчĕ. Çимелли çуккине пĕлеттĕмĕр, хырăм выççи вара ăна пĕлмест. Пÿртне хутма та нимĕн çук, сивĕпе алă-урасем ним пĕлмиех кÿтетчĕç. Пурăннă вĕт, чăтса ирттернĕ çав вăхăта, – терĕ Егор Григорьевич ун чухнехине салхуллăн аса илсе.

Хутла пĕлни кирлех пулнă ун чухне те, анчах та вĕренме майĕ пулман. Кăштах çырма, вулама пĕлни те вăл вăхăтра аван пулнă. 1956-мĕш çулта Якаткасси ачи çак ялтах çичĕ класлă шкула вĕренсе пĕтерет.

Пĕлĕве каярахпа татах та ÿстерес тесе каччă парти шкулне вĕренме каймалла ĕмĕтленет, анчах та килте халсăр çынсем пур пирки çутă ĕмĕт пурнăçа кĕреймест.

Егор Григорьевич Чулхула облаçĕнчи Михайловскинчи вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ. Кĕçех салтак пăтти çиме те вăхăт çитнĕ. Тăван ене таврăнсан вăл ферма заведующийĕнче, Çуткÿлти Культура çурчĕн ертÿçинче, каярах «Сельхозтехникăра» тăрăшнă. Тивĕçлĕ канăва вара перекет банкĕнчен тухнă, унта хуралçă пулса вăй хунă. Кирек епле ĕçе те тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланă, ответлăха туйнă.

Ветеран, çулĕсем сахал мар пулин те, ĕççĕр пачах лармасть. Çынсем ыйтнипе чылай çул хушши вăл старостинче тăрăшнă. Хушма хуçалăхра тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхпе аппаланасси те уншăн ют мар. Вĕлле хурчĕсемпе те ав пахчара кăмăллăх ĕçлет, вĕсемпе калаçать. Çав хушăрах тĕрлĕ сăвă йĕрки шăрçалать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Официально

**ЦЕНТРАЛЬНАЯ ИЗБИРАТЕЛЬНАЯ КОМИССИЯ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**07.10.2011 г. № 13/118-V**
**г. Чебоксары**

**О заявлении члена Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Углевой Натальи Евгеньевны**

В соответствии с пунктами 6,11 статьи 29 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и на основании заявления члена Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса Углевой Натальи Николаевны Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

1. Освободить Углеву Наталью Евгеньевну от обязанностей члена Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса до истечения срока полномочий.

2. Предложить политическим партиям, иным общественным объединениям, представительным органам муниципальных образований, собраниям избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок не позднее 12 октября 2011 года представить в Центральную избирательную комиссию Чувашской Республики предложения по кандидатуре в состав Моргаушской территориальной избирательной комиссии.

3. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комисси Чувашской Республики**
**А.И. ЦВЕТКОВ.**
**Секретарь Центральной избирательной компании Чувашской Республики**
**С.Н. ТАРАСОВ.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи сентябрĕн 26-мĕшĕнчи 1006 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Светлана Николаевна КАРАСЕВĂНА**, шкул çулне çитмен ачасен «14 № «Золушка» ача сачĕ» муниципаллă бюджет вĕрентÿ учрежденийĕн воспитательне;

– **Вера Дмитриевна ЛЮЦЕВĂНА**, шкул çулне çитмен ачасен «8 № «Колокольчик» ача сачĕ» муниципаллă бюджет вĕрентÿ учрежденийĕн воспитательне;

– **Нина Калистратовна ТЕПЕЕВĂНА**, шкул çулне çитмен ачасен «5 № «Рябинушка» ача сачĕ» муниципаллă бюджет вĕрентÿ учрежденийĕн воспитательне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Маргарита Александровна ИВАНОВĂНА**, шкул çулне çитмен ачасен «4 № «Березка» ача сачĕ» муниципаллă бюджет вĕрентÿ учрежденийĕн воспитателе пулăшаканне.

Православи уявĕсем

# Пукрав

Христосăн чăн тĕнĕпе пурăнакан çыннисем хăйсен хуйхипе инкек-синкек вăхăтĕнче çÿлти патша амăшĕнчен – пур хуйхăллисене те лăплантараканран – пулăшу илме ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем Турă Амăшĕ хăй вилес умĕн апостолсене те, пур ĕненекене те: «Эпĕ сире талăха хăвармăп. Хам вилнĕ умĕнче сире тархасласах кĕл тăвăп, сире яланах витсе, хÿтĕлесе тăрăп», – текен сăмахсене асра тытаççĕ.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче шăпах Турă Амăшĕ хăй сăмахне пурнăçланине пĕлтерекен пĕр тĕслĕхе асăнса паллă тăваççĕ. 910 çулхи сентябрь уйăхĕнче арабсем тинĕспе пырса Константинополь хули çине тапăннă. Хулана çавăрса илнĕ, грексене хăйсене парăнма хушнă. Çынсем шанăç çухатнă, вилĕме кĕтсе илме хатĕрленнĕ. Çапах та пĕр вырсарни куна хирĕç Валехри чиркĕве ватти-вĕтти пурте касçи кĕлле пуçтарăннă. Пурте куççульпе йĕрсе Турă Амăшĕнчен пулăшу ыйтса кĕл тума пуçланă. Çав чиркÿрех таса пурнăçпа пурăнакан Андрейпа унăн вĕренекенĕ Епифаний те пулнă. Çĕрлехи кĕлĕ вăхăтĕнче таса Андрей çÿлелле пăхнă та чиркÿ куполĕ айĕнче сывлăшра Турă Амăшĕ çветтуй ангелсемпе, апостолсемпе, пророксемпе пĕрле тăнине курнă. Турă Амăшĕ сывлăшра чĕркуçленсе ларса пĕтĕм тĕнчешĕн, вăл шутра грек çыннисемшĕн те, хăйĕн ывăлне куççульпе тархасласа йăлăннă. Унтан хăй пуçĕ çинчи виткĕчне илнĕ те ик аллипе ăна халăх çинче сарса тытса витсе тăнă. Таса Андрейпа Епифаний çакăн çинчен патшана, патриарха каланă. Çак ырă хыпар часах чиркÿри пур çын патне те çитнĕ. Вара Туррăмăра та, Турă Амăшне те тав тумалли кĕлĕ йĕрки тунă.

Пукрав – хĕл сивви пуçланнă кун. Çавăнпа та вăл кун çитиччен чÿречесене, сакăйĕнчи шăтăксене питĕрнĕ. Пÿрт-çурта анчах мар, выльăх-чĕрлĕх сарайĕсенчи шăтăк-çурăка та сапланă, ăшă тытса хăварнă. Пахчара та çак кунччен пахча çимĕçе пухса кĕртме тăрăшнă.

Çак уява туйсене хута кĕрекен уяв тенĕ. Качча тухас текен хĕрсен çак кун чиркÿре кĕлĕпе пулмалла пулнă. Вĕсем Турă амăшĕн икони умне çурта çутса лартнă.

Пукрав кун кăнтăрлаччен кĕр кунне, кăнтăрла хыççăн – хĕлле, тенĕ. Пукрав кун юр çусан хĕл юрлă пулать, çил хĕвел тухăçĕнчен вĕрсен – сивĕ хĕл пулать, тенĕ ваттисем.

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче

# Пирĕн патра кичем мар





1937 çул район историйĕшĕн çаваннa паллă. 74 çул каялла Мăн Сĕнтĕрте районĕпе пĕрремĕш ача сачĕ уçăлнă. 15 вырăнлă пулнă вăл. Унччен вара çулленех çуллахи вăхăтра ача-пăча площадкисем йĕркеленĕ.

Ача сачĕ ку çуртра 1941 çулччен пулнă. Хыççăн ăна урăх çурта куçарнă. Кунта вара вĕренÿ класне вырнаçтарнă. 1947 çулта çурта юсанă хыççăн кунта каллех ача сачĕ куçнă. 1947–1949 çулсенче ача сачĕ 5–8 ача çÿремелĕх пулнă.

1954 çулта пристрой тунă хыççăн ачасен йышне 50-на çитернĕ. Ача сачĕн пурлăх бази те пуянланса пынă.

Ача сачĕн пурнăçĕнчи палăрăмлă ырă улшăнусем пĕтĕмпех Анна Федоровна Романова ячĕпе çыхăннă. 1949 çулта çемйипе Мăн Сĕнтĕре пурăнма куçса килсен ăна ача садне ертсе пыма шаннă.

Çăмăл пулман ун чухне ĕçлеме. Апат-çимĕçне пасарта туяннă, вутти-шанкине Ильинкăран лашасемпе турттарнă.

Çак вăхăтра Мăн Сĕнтĕрте больницăн çĕнĕ çуртне тунă. Анна Федоровна çине тăнипе ку çурта ача сачĕ валли уйăрса панă. 90 вырăнлă ача садне кирлĕ оборудованипе тивĕçтернĕ, ачасен вылямалли площадкине йĕркене кĕртнĕ. Çĕнĕ ача сачĕ 1966 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă.

Анна Федоровна кунта 1975 çулччен ĕçленĕ. «Халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ» ята, «Ĕç ветеранĕ» медале тивĕçнĕ вăл. Ăна темиçе хутчен те Мăн Сĕнтĕр ял Совет депутачĕ пулма суйланă.

Паянхи ача садне унччен хипе танлаштарма çук ĕнтĕ. «Мечта» ача садне халĕ 140 ача çÿрет. Вĕсене пĕтĕмпе 6 ушкăна уйăрнă. 29 çын вăй хурать пирĕн патра. Вĕсенчен 13-шĕ – педагогсем.

Ачасен пурнăçне тухăçлă та усăллă ирттерме, вĕсене кунта тивĕçлĕ воспитани пама пур майсене те туса панă темелле. Пирĕн ача сачĕн тĕп енĕ вăл кунта çÿрекенсен ÿт-пÿ аталанăвне тĕрĕс йĕркелесе пырасси пулса тăрать.

Район, республика шайĕнчи тĕрлĕ мероприятисене, конкурссене тăтăшах хутшăнатпăр. Çитĕнÿсем те çук мар. Акă кăçал тирпей-илем кĕртессипе республика конкурсне хутшăнса 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултартăмăр. Ăнсăртран мар. Ача сачĕн ĕçченĕсем территорие тирпей-илем кĕртес, илемлетес, илĕртÿллĕрех тăвас тесе çине тăрса ĕçлерĕç. Халĕ вара ача садне пырса кĕрсен хăвна асамлă юмах тĕнчине лекнĕнех туятăн. Чи кирли вара – çак хитрелĕх, илемлĕх туйăмĕ ачасен чунĕнче те йĕр хăварни.

Мăн Сĕнтĕрте ача сачĕ пĕрре кăна. Хăйсен ачисене садике вырнаçтарма заявлени çырса панисем вара татах 90 çын. Каласа хăвармалла, тĕрĕссипе пирĕн ача сачĕ 110 вырăнлă. Хушма пÿлĕмсем уйăрма май килнипе ача садне çÿрекенсен йышне 140-е çитерме пултартăмăр. 2013 çулта вара 80 ача валли пристрой хута яма пăхнă. Ун чухне ачасене садикке вырăнсемпе тивĕçтерес ыйтăвăн çивĕчлĕхĕ те палăрмаллах чакмалла.

**Галина ШОЛКОВА,**
**Мăн Сĕнтĕрти «Мечта» ача сачĕн заведующийĕ.**

**Сăн ÿкерчĕксенче: 74 çул каяллахи ача сачĕ тата хальхи.**

Объявление

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:110101:153, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

# Инкексем пысăк сăтăр тăваймарĕç

**Командăпа штаб тренировки ăнăçлă иртрĕ**



*Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ю. Антонов полковник (варринче).*

Пурнăç улшăннă май общество умне туха тăракан çивĕч ыйтусен пĕлтерĕшлĕхĕ те ÿсрĕ. Вĕсене вăхăтра татса парассипе те пирĕн çĕнĕ технологисене алла илме тивет. Ахальлĕн чавса çывăх та çыртма çук. Çакна пурнăçри нумай ÿкерчĕксем яр уççăн çирĕплетсе параççĕ.

Вăрçă-харçăпа çыхăннă тĕрлĕ инкексем паян хăйсен технологине улăштарчĕç. Пирĕн сăмах çаврăнăшне террорист тата терророла актсем кĕчĕç. Хальхи пурнăçра йышлă халăх хушшинче нимĕнпе те палăрман пĕчĕк ушкăнсем хăйсен суйласа илнĕ объектра сăтăрла ĕç тăвасси хăйне евĕр вăрçăн никĕсне выртрĕ. Çак хăрушлăхран пăрăнса иртме пирĕн ялан сыхă тăмалла, талккишпех сарăлнă фронтра юнашаррисене пулăшма хатĕр пулмалла. Пĕччен çын çапăçу хирĕнче салтак мар тени çĕнĕлле лару-тăрура пĕлтерĕшне ÿстерчĕ кăна.

Юпа уйăхĕн 7-мĕшĕ. Муркашри Парковăй урамран 6 сехет те 45 минутра «Чăвашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн Муркашри газ участокне 4 хутлă çуртăн 1-мĕш подъездĕнче газ шăрши пысăкки пирки пĕлтерÿ çитрĕ. Газ служби çийĕнчех вырăна тухрĕ. Газовиксем вырăна çитсен кунта газ концентрацийĕ чăнах та нормăран пысăкрах пулни палăрчĕ. 6 сехет те 55 минутра газ сирпĕнсе кайнипе пĕр подъезд ишĕлсе анчĕ. Малтанхи кăтартусемпе 7 çын пурнăçĕ татăлнă, 6-ăн аманнă, 8-ăн ишĕлчĕксем айне пулнă. Чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата сирес, пушар хăрушсăрлăхне пăхăнас комисси председателĕ В. Никитин район администрацийĕн пуçлăхне Ю. Иванова доклад тунă тăрăх тивĕçлĕ структурăсем çухалса кайманни паллă пулчĕ. Авари пулнă вырăна газ тата электроэнерги парассине вăхăтлăха чарчĕç, инкек тÿсекен вырăнтан çынсене хăрушлăх çук çĕре эвакуацилерĕç. Вăй илнĕ «хĕрлĕ автана» та пушарнăйсем çийĕнчех çăварлăхларĕç. Инкек вырăнĕнчен тухакан çынсене вăхăтлăх вырнаçтарма йышăннă район центрĕнчи Культура çуртĕнче 42 çын валли вырăн пулчĕ.

Инкеке сирнĕ май тĕрлĕ суран илнисем 7 çын пулни, вилнисен йышĕнче 6 çын иккенни, 2 çынна госпитале хуни палăрчĕ.




*Пушарнăйсем Муркашри подстанцире.*

8 сехетре çак инкек тĕлĕшпе командăпа штаб тренировкин ерÿçисем канашлăва пуçтарăнчĕç. Кунта аварипе çăлав службисен ертÿçисем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа панчĕç. Çирĕплетнĕ йĕркепе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов администрацин ертсе пыракан ĕçченĕсене «Тулли» хатĕрленĕве пухăнма, ку тĕлĕшпе ятарлă хушу ĕçлеме пуçлассине алă пусса пĕлтерчĕ, администраци ĕçченĕсемпе канашлу ирттерсе камăн мĕнле ĕç пурнăçламалли пирки конкретлă ыйтăва пăхса тухрĕ. Кун хыççăн район пĕр алăри пек ĕçлеме пуçларĕ.

9 сехет те 40 минутра вĕрентÿ штабне Муркаш подстанцине сирпĕтсе стройран кăларни пирки хыпар çитрĕ. Унта пушар алхасас хăрушлăх пур. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чăсĕн базинче йĕркеленĕ аварипе çăлав службин ĕçченĕсем шутлă минутрах вырăна çитрĕç. Пулнă инкекпе профессиллĕ кĕрешсе тухнă пушара сÿнтерчĕç, вырăнти электриксем районти ялсене саппас сулсемпе электричество çути парассине çийĕнчех йĕркелерĕç.

Инкек пĕтчен çÿремест теççĕ те, ваттисем калани çак кун татах тÿрре килчĕ. Муркаш подстанцийĕнчи диверсипе террор актĕнчен çăлав службисем Çĕньял Муркашри пĕр килти хушма хуçалăхра сыснасен Африка чуми тупăннă çĕре васкарĕç. Кил хуçи каланă тăрăх эрне каялла палламан çынсенчен туяннă комбикормпа тăрантарнă хыççăн сыснасен хăлхисемпе мăйĕсем çинче тата малтипе кайри урисен шал енче хĕрлĕ-кăвак паллăсемпе витĕннĕ 2 сысна сывлайми пулса вилнине пĕлтерчĕ. Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ĕçченĕсем ку паллăсем Африка чуми пулнине систерсе сыснасене республикăри ветеринари лабораторине ăсатрĕç. Кунта «Выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци» патшалăх учрежденийĕн пуçлăхĕ Н. Яковлев тивĕçлĕ йышăнусем тунине палăртмалла. «Эпизоти вучахне пĕтерес тата вăл сарăлассинчен асăрханас» тĕллевпе чрезвычайлă лару-тăру комиссийĕн васкавлă ларăвĕ иртрĕ. Унта 1-мĕш тата 2-мĕш хăрушлăх зонисене палăртнă май карантин мероприятийĕсене пăхса хăварчĕç. Унпа килĕшÿллĕн контрольпе пропуск пунккĕсем, дезобарьерсем, ДУК спецавтотранспорт ĕçне йĕркелерĕç.

Хăрушă чир ан сарăлтăр тесе Çĕньял Муркашри кашни килти хушма хуçалăхри сыснасене тишкерсе тухрĕç. Сывă мар территорие автотранспорт кĕртессине чарчĕç. 1-мĕш хăрушлăх зонине кĕрекен Çĕньял Муркаш, Муркаш тата Шаптак ялĕсенче пурăнакансемпе ăнлантару ĕçĕсем ирттерчĕç.

Чире сарас мар тĕллевпе 3 ял хуçалăх производство кооперативĕпе пĕр хресчен (фермер) хуçалăхĕ пĕрлештерсе тăракан 13 ялта 2-мĕш хăрушлăх зони тухса хучĕç: «Свобода», Е. Андреев яч. хис., «Оринино» тата В. Пушкинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Çак территорире ветеринари законодательствине пăхăнасси малти вырăна тухрĕ.

Командăпа штаб тренировки çак кун Муркашри вăтам шкула та сиктерсе хăвармарĕ. Шкулта «тухнă пушарта» аварипе çăлав службисем профессиллĕ ĕçленипе 349 ачапа 40 учителе вăхăтра эвакуацилеме май килчĕ. Çăлавçăсем «хĕрлĕ автана» та вăхăтра сÿнтерчĕç.

Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн специалисчĕ Г. Любимов йывăр вăхăтра çухалса кайманни, кĕске хушăрах гражданла оборонăн гражданла организацийĕсене ĕçе кĕртни, пушар хăрушсăрлăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлани тата ирĕке кайнă çулăмпа кĕрешме вăйсене мобилизацилени, индивидуаллă хÿтĕлев хатĕрĕсене çителĕклĕ илсе тухни, вĕсене валеçмелли пунктсем уçни пĕтĕмĕшле лару-тăрăва уçăмлăх кĕртме пулăшрĕ.

– Питĕ ăста йĕркеленĕ. Чрезвычайлă лару-тăрура тата вăрçă вăхăтĕнче хăйсем мĕн тума пултарнине Муркашсем, ман шутпа, чи çÿллĕ шайра кăтартрĕç. Районти ответлă специалистсемпе тĕрлĕ ведомствăсен пуçлăхĕсем пĕр çыхăнура пулчĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕ çинчен вĕрентÿ пуçлăхне тÿррĕн доклад туса тăнăран районта чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсене вăхăтра татса пама пултарнине пăхма кăмăллă, – терĕ Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ю. Антонов полковник.

– Эпир паян кунта килнишĕн ÿкĕнместпĕр. Муркашсем маттур. Йывăрлăхсем умĕнче çухалса каймарĕç. Условнăй инкексем те пысăк сăтăр тăваймарĕç. Çавăнпа та пушар гарнизонне вăйлатма Уйкас Янасал тăрăхне çĕнĕ пушар машини парас терĕмĕр. Эсир кашни ĕç çине хуçалла пăхасси, пушар хăрушсăрлăхне малти вырăнта тытасси пирки пирĕн иккĕленÿ çук, – терĕ Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн пуçлăхĕ Станислав Юрьевич Антонов генерал-майор пушар автомашини парнеленĕ май Сосновкăри шкул ачисемпе тата ял çыннисемпе тĕл пулнă чух.

Черетлĕ пысăк вĕрентÿ хыçа юлчĕ. Умри хура кĕркуннепе шартлама хĕл кунĕсем пысăк тимлĕх ыйтаççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Прокуратурăран**

## Саккуна пăхăнман

294-ФЗ номерлĕ «Муниципалитет тĕрĕслевне ирттернĕ чухне юридици сăпачĕсемпе уйрăм предпринимательсен прависене хÿтĕлесси çинчен» Федераллă саккунăн 9-мĕш статйин 6-мĕш пайĕнчи йĕркене Уйкас Янасал тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пурнăçламан. Ответлă ĕçченсен муниципалитет тĕрĕслев органĕн планпа килĕшÿллĕн ирттернĕ тĕрĕслевĕн проекчĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕччен прокуратурăна тăратмалла пулнă.

Çавна май район прокурорĕ çÿлерех асăннă ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем административлă майпа йĕркене пăснине çирĕплетнĕ. Вĕсем хăйсен тивĕçне туллин пурнăçламаннишĕн, ял тăрăхĕн ĕç-хĕлĕн документчĕсене саккунпа килĕшÿллĕн прокуратурăна вăхăтра çитерменнишĕн Раççей Федерацийĕн КоАПăн 19.7 статйипе явап тыттарма административлă ĕç пуçарнă. Район прокурорĕн постановленийĕпе килĕшÿллĕн Уйкас Янасал тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене штраф укçи тÿлеттерессине палăртнă.

**Г. ЕРЕМЕЕВА,**
**район прокурорĕн пулăшуçи, 2 класлă юрист.**

**Çыру йĕрĕпе**

## Тирпейлĕх – хамăршăн

«Хисеплĕ хаçатăмăр «Çĕнтерÿ ялавĕ», сирĕнтен пулăшу ыйтатпăр. Оринино ял тăрăхĕнче «Пищевик» сад юлташлăхĕ вырнаçнă. Унта çÿрекенсем ĕçчен те пултарулă, пахча çимĕç туса илме ăста. Юлташлăх ертÿçи – С.В. Хабазин. Сад ăстисем çĕр лаптăкĕсем патне çăмăл машинăсемпе çÿреççĕ.

«Пищевик» сад юлташлăхĕ тавра тасамарлăх питĕ нумай. Хулана каякансем çÿпĕ-çапăна йывăç речĕсем хушшине пăрахса хăвараççĕ. «Восток» хуçалăхăн сухаласа акмалли çĕр лаптăкĕнче шăтăк чавнă, тасамарлăха унта тултараççĕ. Подстанци çывăхĕнче икĕ свалка йĕркеленĕ тата ытти çĕрте те. Çуп-çапран хăтăлма пулăшăр.

Сад ăстисем проектпа картта çине палăртнă çулпа çÿремесĕр «Оринино» тата «Восток» ял хуçалăх предприятийĕсен çĕр лаптăкĕсене пĕчĕклетрĕç. «Восток», «Оринино» хуçалăхсем тата «Пищевик» сад юлташлăхĕ хушшинче патшалăх стандарчĕпе чикĕ йĕркелесси пулĕ-и?»

**Хаçат вулакан.**

***Ку ыйтупа пирĕн хаçат корреспонденчĕ район администрацийĕн çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен эксперт специалисчĕпе Г.Г. Симаковпа тĕл пулса калаçрĕ, вăл çапла хуравларĕ:***

– Кашни çын хăй хуçалăхне тирпей-илем кĕртмелле, аякран килсе йĕркелессе кĕтмелле мар. Иртен-çÿрен тасамарлăх пăрахса хăваракансен вара хăйсен чунлăрах пулмалла, ăна валли ятарлă вырăн уйăрни пирки кашни çыннăн пĕлмелле, çавăнта пăрахмалла. Çут çанталăк пĕрлехи пуянлăх пулнине манмалла мар.

Хăвăр хушăра канашламалла, уйрăм шăтăка тултарнă тасамарлăха çиелтен тăпрапа витсе вăл вырăна йывăç хунавĕсем лартмалла. Çапла туни тĕрĕсрех пулать. Халĕ шăпах йывăç лартас тапхăр пырать. Малашне вара йĕркене пăсакансене курсан асăрхаттармалла.

Висĕ хуçалăх чиккине тăвассипе вара килĕшÿллĕн харпăр хăй хушшинче калаçса татăлмалла.

**Культура хыпарĕ**

## Совет Союзĕн Геройне халалласа

Вăрçă ахрăмĕ самай хыçа юлчĕ пулин те ун синкерĕ пирĕн асăмрах-ха. Çĕнтерÿ тивлечĕпе вара эпир паян пурăнатпăр, вĕренетпĕр, малалла талпăнатпăр.

Районти ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека ĕçченĕсем çамрăксене патриотла воспитани парассине яланах тĕпе хурса ĕçленĕ. Çавна май вĕсене Аслă Отечественнăй вăрçă пулăмĕсемпе, çынсен паттăрлăхĕсемпе тĕплĕнрех те ытларах кăсăклантарас тĕллевпе «Мы помним подвиги героев» информаци буклечĕ кăларнă. Ăна Совет Союзĕн Геройне Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралса ÿснĕ Борис Михайлович Васильева халалланă. Буклетра унăн паттăрла ĕçĕсем пирки тĕплĕн çырса кăтартнă.

**Хамăр инф.**

**Страхлакансен пултарулăхĕ**

## Росгосстрах

Хур-шурне нумай вăл курчĕ,
Кăçал 90 çул тултарчĕ.
Тымар çирĕп пулнăран
Пур енлĕн те эс страхлан.
Паллă кунпа саламлатăп:
Тулли пурнăç пултăр сан!
Юман пек çирĕп тăратăн –
Санпа пултăр страхлакан!
Росгосстрах ĕçченĕсен
Ялан ăшă кăмăлсем.
Вĕсем патне çитсессĕн
Нумай ырă сĕнÿсем.
Кашни çулах страхлансан,
Инкексенчен сыхлансан,
Пур суранран упрансан,
Пулăшусăр хăварман!
Çут çанталăкĕ упрантăр –
Эсĕ ăна тĕкĕ тăр!
Турри пурне те сыхлатăр!
Росгосстрах вара страхлатăр!

**КЛАВАА (автор çапла алă пуснă).**

# Хусанта Мария лартнă йывăç та ӳсет

**Юнкă шкулĕ хыпарлать**




Раççейĕн пур кĕтесĕнчи – Балтика тинĕсĕнчен пуçласа Лăпкă океан таранах – çамрăк лесничийсем сентябрĕн 27-мĕшĕнче Хусана пухăннă. Пĕтĕм Раççейри пĕрремĕш съезда 55 регионти 300 ытла делегат килсе çитнĕ. Вĕсен шутĕнче Юнкăри вăтам шкулта вĕренекен Мария Сытина та **(сăн ӳкерчĕкре сулахайри)**. Вăл Куславкка районĕнчи Мария Христофоровăпа пĕрле Чăваш Республикин представителĕ пулнă.

Çамрăк экологсем селекципе вăрлăх центрĕнче, дендрологи садĕнче тата ытти вырăнсенче пулса курнă. Чылай мастер-класс ĕçленĕ унта. Хастар ĕçĕпе палăрса Мария Сытина дипломпа хаклă парнесене тивĕçнĕ.

Съездăн анлă та интереслĕ программинче делегатсем йывăç лартассине те пăхса хунă. Халĕ кӳршĕ республикăра пирĕн Мария лартса хăварнă йывăç та пур.

## Ăнăçлă «вĕçев»

Космонавтика çулталăкĕ пулнăран пирĕн шкулти çамрăк космонавтсен отрячĕн кăçал нумай мероприятие хутшăнма май пулчĕ. Акă сентябрĕн 30-мĕшĕнче эпир «Çул – космоса» республикăри наукăпа практика конференцине хутшăнтăмăр.

Конференцире çĕр-шыв космонавтикин 50 çул хушшинчи аталанăвĕ, республикăри çамрăк космонавтсен юхăмĕн программи, Чăваш ен поэчĕсемпе писателĕсен произведенийĕсенчи космонавтсем пирки докладсем пулчĕç. Сумлă çынсем паллаштарчĕç вĕсемпе: СССР тава тивĕçлĕ штурман-испытателĕ, Раççей Геройĕ И. Ирейкин, çар наукисен докторĕ И. Николаев полковник, Чăваш халăх поэчĕ В. Туркай тата ыттисем те.

Эпир вара çулталăкри хамăр пурнăçланă ĕççем тата ăнăçусем çинчен каласа патăмăр. Раççей тата республика шайĕнчи наградăсем Юнкăри çамрăк космонавтсен сахал мар. Çапла ăнăçлă «вĕçнĕшĕн» пирĕн отряд дипломпа парнесене тивĕçрĕ.

**И. КИРШЕВА,**
**шкулти аслă вожатăй.**

**Патриотла воспитани**

## Хăюлăх урокĕ ӳсĕмлĕ вĕçленчĕ

Октярĕн 3-мĕшĕнче Пăрачкав салинче кадет класĕсен смотр-конкурсĕ иртрĕ. Ăна çулсерен «Товарищество офицеров «Сыны Отечества» регионти обществăлла организаци ирттерет. Çак организаци çине чăвашсен Мускаври ентешлĕхĕ те çирĕппĕн тайăнса ĕçлет.

Çамрăксен патриотла воспитанийĕ, вĕсен кăмăл-сипечĕ – çак ыйтусене офицерсем пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Чăваш хĕрĕсемпе каччисем паянхи çăмăл мар пурнăçра хăйсен вырăнне тупма пултарччăр тесе тăрăшаççĕ вĕсем. Çавăнпа та офицерсемпе ирттернĕ тĕл пулусем яланах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кашни тĕл пулу хăйне май хăюлăх урокĕ пек иртет. Пурнăçра темĕн те курма, чăтса ирттерме тӳр килнĕ офицерсен кадетсене каласа памалли те, вĕрентмелли те чылай.

Смотр-конкурсра теорипе практикăна хаклама май паракан чылай конкурс пулчĕ. Муркаш лицейĕн кадечĕсем хăйсене лайăх енчен кăтартрĕç – виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕç.

**С. РОЖКОВА,**
**лицей вĕрентекенĕ.**

**Спорт**

## Паттăрсен кубокĕшĕн

Октябрĕн 15-мĕшĕнче «Сывлăх» ФСК-ра шывра ишес енĕпе шкул ачисен уçă ăмăртăвĕ иртет. Командăра 3 арçын ачапа 3 хĕр ача пулмалла.

Хутăш эстафетăра ирĕклĕ майпа (вольный стиль) хĕр ачасен 25 метр ишмелле, арçын ачасен – 50 метр. Ăмăртăва хутшăнакансен купальник (плавки), пуçа тăхăнмалли калпак, сланцы, ал шăлли пулмалла.

Ăмăрту 11 сехетре пуçланать.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

## Биатлон – Муркашсем валли

Иртнĕ шăмат кун Шупашкарта Чăваш енĕн çуллахи биатлон Кубокĕ иртнĕ. 50 ытла биатлонист медальсем çĕнсе илессишĕн старта тухнă. Ӳсĕмсене кура арçынсен пилĕк ушкăнĕ тата хĕрсен тăвата ушкăнĕ ăмăртнă.

4 çухрăмлă спринтра Павел Охотников çĕнтернĕ. Маларах Çатракассинчи вăтам шкулта вĕреннĕскер (тренерĕ А. Соловьев) халĕ ăсталăхне Шупашкарти 2 № Олимп резервĕсен ятарлă спорт шкулĕнче ӳстерет.

Пирĕн район хĕрĕсем те ăмăртăва лайăх кăтартусемпе вĕçленĕ. Халĕ çӳлерех асăннă спорт шкулĕнче вĕренекен, маларах Ярапайкасси шкулĕнчи Э. Гордеев тренерăн воспитанникĕсем – Анастасия Костина (1-мĕш вырăн), Светлана Соколова (1-мĕш вырăн) тата Диана Чернова (2-мĕш вырăн) – тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăнăçлă ăмăртса çĕнтерӳçĕсен картлашки çине тăма пултарнă.

Хĕллехи сезона лайăх хатĕрленсе биатлонистсене малалла та пире лайăх кăтартусемпе савăнтарма ăнăçусем сунатпăр. Район çамрăкĕсене пĕрре мар ырă тĕслĕх кăтартмалла пултăр.

## Армспортра – иккĕмĕш

Октябрĕн1–2-мĕшĕсенче районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн Ярапайкассинчи уйрăмĕнче ăсталăх туптакан Екатерина Иванова армспорт енĕпе республика ăмăртăвне хутшăннă.1994–1995 çулсенче çуралнă хĕрсен ӳсĕмĕнче (65 кг виçере) 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă.

**Хамăр инф.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб. Установка, гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19.** 1-12.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 5-5.

**Прогноз погоды**

| | среда 12 октября | | | | четверг 13 октября | | | | пятница 14 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +10 | +11 | +12 | +11 | +10 | +11 | +11 | +7 | +4 | +6 | +7 | +4 |
| Давление мм | 738 | 740 | 740 | 738 | 734 | 734 | 737 | 739 | 741 | 744 | 746 | 747 |
| Влажность % | 79 | 81 | 72 | 86 | 89 | 97 | 79 | 84 | 89 | 86 | 72 | 92 |
| Ветер м/сек | Ю-З 5 | Ю-З 6 | Ю-З 5 | Ю 3 | Ю 2 | З 4 | З 5 | З 5 | З 4 | З 5 | З 4 | С-З 3 |
| Солнце восход/заход | | 07:17 | 18:01 | | | 07:19 | 17:58 | | | 07:21 | 17:55 | |
| Луна восход/заход | | 17:31 | 07:45 | | | 17:48 | 08:56 | | | 18:10 | 10:07 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Продается двухкомнатная квартира по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 19, кв. 5. Цена договорная. Тел.: 8-919-673-90-87, 8-919-673-90-89.**

* * *

КИРПИЧ
более 500 видов и цветов
Газосиликатные блоки
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
ТК "ТЕРМИНАЛ"
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55.** 5-5.

* * *

**Продаю корову. Звонить по тел.: 8-927-991-50-72.**

* * *

**Ыраш, сĕлĕ, вĕтĕ çĕр улми сутатăп. Тел.: 8-952-021-75-90, 8-927-847-20-55.**

* * *

**Куплю старинные монеты: медные, серебряные, золотые. Монеты СССР, РСФСР до 1950 года. Дорого. Тел.: 8-927-665-76-52.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хĕрлĕшурă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-960-313-15-48.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.** 2-5.

* * *

**Приглашаем всех, кого интересует дополнительный заработок. Возможность совмещать любой работой. Возраст и образование значения не имеют. Зонить по тел.: 8-960-310-01-29, 8-927-850-18-58.** 2-5.

* * *

**Требуются рабочие на производство мягкой мебели. Оплата сдельная, своевременная. Тел.: 8-903-065-50-40, 8-905-343-08-23.** 1-2.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070301:135, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:070301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5160 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:250301:111, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, с. Александровское, ул. Центральная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1887 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070503:80, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3907 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070301:133, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:070301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5248 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:092701:1025, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:092701, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5531 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:140301:203, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:140301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения»:

- с кадастровым номером 21:17:140301:205, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:140301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4000 кв.м.;
- с кадастровым номером 21:17:140301:204, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:140301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 3000 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.



Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 62-3-80. 8-10.

**В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб. Тел.: 8(8352)36-42-92, 36-42-94.**

* * *

**Жигули валли прицеп туянатăп. Тел.: 8-987-678-51-00, 8-987-678-50-88.**

Турай шкул коллективĕ кунта газооператор пулса ĕçлекен В.Н. Романовăн амăшĕ
**Анна Романовна**
**РОМАНОВА**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Совет, правление и коллектив Большесундырского райпо выражают искреннее соболезнование продавщице магазина «Культтовары» Большесундырского райпо Храмовой Н.А. по поводу безвременной кончины
**МАТЕРИ.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете пана 11.10.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.